Хĕресĕн хăваҫĕ пур тĕрлĕ инкекрен сыхласа тăрат̆.

Ей Турӑ, Хăван Хĕресў хăваҫĕпе пур тĕрлĕ усалтан витсе усра пире.

# Воздвиженіе
# Честнаго и Животворящаго
# Креста Господня.

*(14 сентября).*

**На чувашскомъ языкѣ.**

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

**№ 94.**

**КАЗАНЬ.**
**Центральная Типографія.**
1913.

Ей Турӑ, Санăн Хĕресў мухтавлă пултăр.

Хĕрес хăваҫĕпе нумай ҫынсем вилес ҫĕртен хăтăлса йулнă.

## ХРИСТОСӐН ТАСА ХӖРЕСНЕ ҪӖКЛЕНӖ КУН ВӖРЕНТСЕ КАЛАНИ. (14 сентября).

Пайанхи кун Іисус Христосӑн хӗресне хисеплесе праҫник тӑваҫҫӗ. Іисус Христоса іудейсем кураймасӑр хӗрес ҫине пӑталаса вӗлернӗ. Христос вилӗмрен ҭӗрӗлсе тӑрсан, пӗлӗт ҫине ҫӗкленсен кайран, Христоса пӑталанӑ хӗресе іудейсем таҫта ҫӗр айне пытарса хунӑ.– Христос ҫуралсан кайран пӗр виҫӗ ҫӗр ҫул ытла иртсен, грексен патши Константин вӑрҫа кайнӑ. Вӑл тӑшмана хирӗҫ тухас умӗн, кӑнтӑрла пӗлӗт ҫинҭе хӗрес палли курнӑ, вӑл хӗрес ҫиҫӗм пек ҫиҫсе тӑнӑ. Хӗрес айӗнҭе ак ҫак сӑмахсем пулнӑ: ҫ а к ӑ н п а ҫ ӗ н т е р, тесе ҫырнӑ. Ҫапла пӗлӗт ҫинҭе паллӑ курсан. Константин патша пӗр хӑрамасӑр вӑрҫа кайнӑ та, хӑй тӑшманне ҫӗнтернӗ вара. Константин патшан амӑшӗ Елена тӑшмана ҫӗнтерни Іисус Христос пулӑшнипе пулҭӗ тесе шухӑшланӑ. Вӑл вара Христосӑн хӗресне шыраса тупасшӑн пулнӑ. Христоса Іерусалим хули патӗнҭе пӑталанӑ. Ҫавӑнпа Константин патша амӑшӗ Елена Христосӑн хӗресне шырама Іерусалиме кайнӑ. Іерусалиме пырсан, патша амӑшӗ Елена пуринҭен те ыйтса ҫӳренӗ: Христоса пӑталанӑ хӗресе ӑҫта хунӑ-ши? тесе тӗпҭесе ҫӳренӗ. Ӑҫта хунине никам та пӗлмен. Унтан вара пӗр Іуда йатлӑ ватӑ еврей ҫынни, Христосӑн хӗресӗ ӑҫта выртнине кӑтартса панӑ. Христосӑн хӗресне ҫӗре пытарнӑ. Вӑл тӗлте суйа тӗнлӗ ҫынсен кӗл – тумалли ҫурт пулнӑ. Елена ҫав ҫурта пӑстарнӑ та, ҫӗре алта пуҫланӑ. Ҫӗре алтсан алтсан виҫӗ хӗрес тухнӑ. Христосӑн хӗресӗ хӑшӗ? пулнине нийепле те пӗлме пулман. Ҫав вӑхӑтрах вилнӗ ҫынна йатса пынӑ· Макарій патріарх вилнӗ ҫынна ҫӗклесе пыракансене ҭарӑнма хушнӑ. Хӗрессене вилнӗ ҫын ҫине хура пуҫланӑ. Пӗрне хунӑ, нимӗн те пулман; тепӗр хӗресне хунӑ, нимӗн те пулман; виҫҫӗмӗш хӗресне хурсанах, вилнӗ ҫын ҭӗрӗлсе

тăнă. Çак ĕçрен вара Христосăн хĕресне палланă. Çавăнта курса тăракансем, Христоса ĕненекен çынсем, пур те Хĕрес умĕнҫе ӳксе пуççапса хĕресе ҫуп-тăва пуçланă. Халăх пит нумай пулнă; халăх пит нумай пирки Хĕресе курма пурне те май пулман. Халăхсем пур те курҫҫăр тесе, Макарій патріарх çӳлĕ çĕре улăхса тăнă та, Хĕресе çĕкле, çĕкле халăха кăтартнă. Хĕресе çĕклемессерен çынсем сăхсăхса тăнă. Çавна асăнса пайан праçник тăваççĕ.

Христос хĕрес çинҫе пăталанса вилсе çынсене шуйттан аллинҫен хăтарнă. Çынсене рай алăкне уçса панă. Çавăнпа Христоса ĕненекен çынсем Христосăн хĕресне пит хисеплесе пурăнаççĕ. Христосăн хĕресĕ Христоса ĕненекен çынсене илемлетсе тăрать, вĕсене палăртса тăрать. Христоса ĕненекен çынсем хăйсем Христоса ĕненнине ытти çынсене Хĕрес çакса çӳресе кăтартаççĕ, хăйсен çине хĕрес палли туса хăйсене палăртаççĕ. Кам çинҫе хĕрес çук, кам сăх-сăхмасть, вăл çын Христоса ĕненекен çын мар вара.

Христос хĕрес çинҫе пăталанса вилсе шуйттана çĕнтернĕ. Христосăн хĕресĕ халĕ те шуйттана хăратса тăрать, шуйттан хĕресрен пит хăрать. Константин патша пĕлĕт çинҫе курăннă хĕрес паллипе хăйĕн тăшманне çĕнтернĕ. Епир те хамăр çине хĕрес палли туса курăнман тăшманашуйттана çĕнтерме пултаратпăр. Шуйттан çынна астарса çылăха кӳртес тесе çын ăшне тĕрлĕ усал шухăшсем кӳртет, çавăн пек ҫухне епир шуйттана хамăр çине хĕрес палли туса çĕнтерме пултаратпăр. Усал шухăшсем килсе кĕрсенех, хĕрес çинҫе пăталанса вилнĕ Христос çинҫен аса илсе сăх-сăх, çавăнтах вара усал шухăш сирĕлсе кайать. Тата хăш ҫухне çынна пит хытă çилĕ килсе кайать, çавăн пек ҫухне те сăх-сăхсанах, çилĕ таçта иртсе кайать. Христоса ҫунтан, пĕтĕм ҫĕререн ĕненсе сăх-сăхсан, тата ҫирлĕ çынсем сывалаççĕ. Пĕрре апостол Іоанн Богослов

пӗр ҫирлӗ ҫын ҫине хӗрес палли тунӑ та, ҫирлӗ ҫын ҫавӑнтах сывалнӑ. Хӗрес хӑваҫӗпе нумай ҫынсем вилес ҫӗртен хӑтӑлса йулнӑ. Пӗрре сӑваплӑ Ѳеклана ҫунтарса вӗлерес тесе тӑшмансем вут ҫине хунӑ. Ѳекла хӑй айӗнҫи ҫунса выртакан ҫапӑ ҫине, вутӑ ҫине хӗрес палли хунӑ та, вут ӑна нимӗн сийен те туман.

Ей ырӑ ҫынсем! Христосӑн хӗресӗ пит хӑватлӑ. Хӗресӗн хӑваҫӗ Христоса ӗненекен ҫынсене пур тӗрлӗ инкекрен те сыхласа тӑраӳ. Ҫавна пӗлсе есир те хӑвӑр ҫине хӗрес палли хума, сӑх-сӑхма, нихӑҫан та ан ӳркенӗр. Усал шухӑш килсе кӗрет-и сана, ҫуну хуйхӑраӳ-и санӑн, ҫун хӑраӳ-и санӑн, Христоса ӗненсе сӑх-сӑх, нимӗн те пулмӗ сана, нимӗн усал та тивмӗ сана. Ей Турӑ, Хӑвӑн хӗресӳ хӑваҫӗпе пур тӗрлӗ усалтан витсе сыхласа усра мана. Амин. Свящ. *П. Егоровъ.*



От Переводческой Коммиссіи Православнаго Миссіонерскаго Общества печатать разрѣшается. Казань, 31 января 1913 года.

Предсѣдатель Переводческой Коммиссіи, профессоръ Казанской Духовной Академіи **М. Машаковъ.**